# ÇЕÇПĔЛ МИШШИ ÇУРАЛНĂРАНПА – 110 ÇУЛ



**Виталий РОДИОНОВ,**
**филологи ăслăлăхĕсен доктторĕ**

# «Сар кайăкăм шур юр айĕнче...»

1922 çулхи акан 9-мĕшĕнче Çеçпĕл Мишши ятсăр сăвă хайлать (ун чухне вăл Бровар станцине вырнаçнă ĕçсем — вырсăлăхран тарса килекенсем валли вăхăтлăх пурăнмалли çурт уçма кайнă пулнă):

*Ĕнер йывăç пахчи кăмăлне*
*Кун каçах туй турĕ çуркунне.*

*Ир-иртенпех чечек пахчинче*
*Чĕрĕлсе çĕкленчĕ сар чечек.*

*Çамрăк хурăн туратти çинче*
*-Сар кайăк тĕрлерĕ каçчен.*

*Паян шыв-юр чечек пахчинче,*
*Юр айĕнче хĕрлĕ-сар чечек.*

*Сар кайăк çук хурăн тăрĕнче,*
*Сар кайăкăм шур юр айĕнче.*

Чăваш халăх поэзийĕнче «сарă кайăк» (вырăсла ăна «иволга» теççĕ, вăл ытларах вăрмансенче пурăнать) сăнарĕ вăйлă аталаннă, вăл пирĕн халăхăмăршăн чи хитре юрлакан вĕçен кайăк. Çеçпĕл Мишши сăввисенче çак кайăк чылай чухне поэта символлать. Тĕслĕхрен, «Эп вилсен...» хайлавĕнче унăн çакнашкал йĕркесем пур:

Чăвашра çĕнĕрен сăвăç
çуралмассерен, –
Ман тăпра çине сар кайăк
Пытăр ир çинче.

Çапла вара, юр айĕнчи сарă кайăк вăл Çеçпĕл Мишши хăй, унăн синкер пурнăçĕ, поэтăн телейсĕр кунĕ-çулĕ...

«ПĂТАЛАРĔÇ ТĂВАН
ÇĔРШЫВА...»

Çеçпĕл Мишшин пурнăçри синкерлĕхне пĕрисем Остер тапхăрĕнче (П. Бекшанский), теприсем вара татах та маларах – Шупашкар тапхăрĕнчех (Н. Рубис) – пуçланнă тесе шутлаççĕ. Маншăн юлашки шухăшĕ тĕрĕсрех пек туйăнать.

Аса илер-ха поэтăн вилес умĕн хайланă сăввисене. Вĕсенче кашнинче пекех инçетри тăван çĕршĕн тунсăхлани, уншăн пăшăрханни-кулянни сисĕнет. Акă «Паянтан» сăвăри йĕркесем:

*Асап тăвĕ çине çаруран*
*Çĕршыва çавăтса илсе кайрĕç.*
*Шупашкар хўмисен юлнă тарĕ*
*Çĕмĕрлнĕ чĕремре паянтан.*

Поэт куçне Остер тавраш ĕнче те Шупашкар хўмисем курăннă. Чăвашсем чул хўме тесе тĕрмепе ун картине те ытарлăн палăртнă. Юнлă тар тени вара тĕрмере ларакансен суран юнĕпе асап тарĕ тенине пĕлтерет. Эппин, тĕрмере ларнă вăхăт сăвăç чĕрине ĕмĕрлĕхех сусăрлатса хăварнă, унăн синкерлĕхĕ шăпах çав пулăмпа çыхăннă тени чăнах та тĕрĕсрех темелле.

Çĕршыва Асап тăвĕ çине камсем илсе кайнине «Или! Или! Лама савахфани!..» сăвăран пĕлме пулать:

*Таврара хурахсем ахăраççĕ,*
*Тӳресем кăмăллăн кулкалаç.*
*Çаруранлă çĕршыв макăрать-çке,*
*Ун çине витĕнет тĕттĕм каç.*

Хурахсем тесе поэт хура халăхпа патшалăха çаратакансене палăртни иккĕленӳсĕр пек. Тӳресем вара – влаçра ларакан «коммунизм бюрократĕсем» тата «тăнсăр такасем» (чи малтан Çеçпĕл Мишши çак выльăхсене çар тата ЧК çыннисемпе танлаштарнă). Шăпах çавсем Чăваш çĕршывне 1920 çул вĕçĕпе 1921 çул пуçламăшĕнче «хĕрес çумне пăталаса лартаççĕ», урăхла каласан, синкерлĕ лару-тăрăва кĕртсе ӳкереççĕ.

Кăштах хăш-пĕр тĕслĕхпе палăртар.

Продразверстка йĕркине Раççейре 1919 çулта кĕртеççĕ, унпа килĕшӳллĕн хресченĕн çитĕнтернĕ тырă-пулăпа ытти апат-çимĕçĕн пĕр пайне патшалăха памалла пулнă. Çавна пула чылай чухне хресчен кил-йышĕн выçăллă-тутăллă пурăнма тивнĕ.

1920 çулта чăваш хресченĕсен кĕлечĕсене тырă-пулă ытти çулхисенчен сахалтарах кĕнĕ. Анчах та Мускав куçĕнчен ӳкес килмен пуçлăхсен, пулăшу ыйтас вырăнне продразверстка планне 136 процент таран тултарнă. Çак Чăваш ревкомĕ (пуçлăхĕ Д.С. Элмень) тунă «çитĕнӳ» синкерлĕх енне пуснă пĕрремĕш утăм пулнă. Чăваш хресченĕсен çиме тавраше хĕле кĕнĕ-кĕменех пĕтсе ларнă, çавна май хăшĕ-пĕри вăрлăхлăх тырра авăртма пуçланă.

Иккĕмĕшĕ. Чи йăнăш утăм шутне вăрлăха ытларах ял кĕлечĕсенче упрамалла тесе Советсен VIII съезчĕ йышăннă хыççăн Чăваш Автономи облаçĕн пуçлăхĕсем тунă çак-çак ĕçсене тата йывăр лару-тăрăва кĕртмелле:

1) хресченсене съезд йышăнăвĕн ырă пĕлтерĕшĕсене çителĕклĕ ăнлантарманнине, ăнлантару вырăнне ытларах хăрату мелĕсемпе усă курнине;

2) ялсенчи коммунистсемпе вулăс пуçлăхĕсен сумĕ-хисепĕ тата хастарлăхĕ пулманнине;

3) автономи пуçлăхĕсем класс кĕрешĕвĕ хĕрсе пырать, чăвашсен Октябрь революцийĕ пулман, çавăнпа та татăклă хирĕçӳ вăхăчĕ çитмеллех тесе ĕненнине, çавна май хăйсене хирĕçле тунă ĕçсене пурне те контрреволюципе танлаштарнине;

4) «Чаппан вăрçине» юри провокацилесе хĕтĕртнине, пин çурă ытла салтака чĕнтерсе хресченсен шучĕпе тăрантса-çитерсе усранине;

5) пăлхава хутшăнакансене (пин çынна яхăн) пĕр судсăр-мĕнсĕр персе пăрахнине…

Списока татах та тăсма, кашни пунктне фактсемпе çирĕплетме пулать. Ахальтен мар ĕнтĕ юнашарти Чулхула облаçĕпе Тутар Республикинчи лару-тăру чылай çăмăлтарах пулнă, вĕсен çĕрĕсем çине çумăр пĕр пĕрчĕ те ытлашши ӳкмен пулсассăн та, кӳршĕсем Мускав панă продразверстка планне ытлашши ирттерсе тултарман, вĕсен вăрлăх пухмалли норми те чылай пĕчĕкрех пулнă. Çавсем лару-тăрăва хĕтĕртсе те çынсене хăратса хресчен чăтăм-тӳсĕмне вĕçне çитермен, пин çурă салтак чĕнсе илсе «упшур команди» (XVIII

ĕмĕрте чăваш ялĕсенче хресчен шучĕпе тăранса пурăннă патша салтакĕсем) ĕçне тума ирĕк паман. Енчен те Элменьпе унăн ушкăнĕ çав асăннă йăнăшсене туман пулсассăн, Чăваш Автономи облаçĕнчи выçлăх чылай çăмăлтарах пулнă пулĕччĕ, çĕр-çĕр пин çын таран çăкăр татăкĕшĕн тĕнче касса çӳреме тухса каймĕччĕ…

«Çаруранлă çĕршыв макăратьçке» тесе çырнă чух Çеçпĕл Мишши хăрушă синкерлĕхе туйса тата курса тăнă-тăр. Пăлхав шăпах вăл тĕрмере ларнă чух пулса иртнĕçке, ЧК камерисене ун чухне пилĕк çĕре яхăн хресчен тытса хупнă, вĕсене хĕненĕ те асаплантарнă. Çеçпĕл Мишши çаксене пĕтĕмпех пĕлнĕ тата хăйĕн куçĕпе курнă. Çав тĕрме хӳмисем чăннипех юнлă та тарлă пулни ăна пĕрре те иккĕлентермен. Вăл асапланакан пăлхавçăсене арестлекенĕсем тата пăркăчлаканĕсем мĕн тери пысăк «идейăллă работниксем» пулнине те витĕр курса тăнă.

Поэт шăллĕн Гурий Кузьминăн «Пиччем çинчен» ятлă аса илӳ кĕнекинче (Шупашкар,1973) çапларах йĕркесем пур: «Комисси хваттерсем пăхса çӳренĕ вăхăт тĕлне облаçа йĕркелеме килнĕ ответлă ĕçри çынсен чылайăшĕн хваттерсем пулнă. Тĕслĕхрен, пĕри хальхи Хĕрлĕ площадьри икĕ хутлă йывăç çуртра пурăннă. Мишша çак çынна темшĕн, те тимĕр-кăвак утпа хула тăрăх кумса çӳренĕшĕн (ăна ĕçе те, ĕçрен килне те яланах рысакпа ăсататчĕç), юратмастчĕ, совет чиновникĕ тетчĕ… Хваттерсене тĕрĕсленĕ чух çав çын комиссие çывăха та ярасшăн пулман, анчах комисси членĕсем вăйпах пырса кĕрессĕ те çаксем, арăмĕпе иккĕшĕ, икĕ хутлă çурта пĕтĕмпех хăйсем йышăннине курса тĕлĕнессĕ. Мишша кун пек чух куçран каламасар чăтаймастчĕ. «Ĕмĕтсемпе эсир, юлташ, пĕртте коммунист пек мар, улпут пек хăтланатăр, икĕ хутлă çурта иккĕн йышăннă та, комиссие хăрататăр. Сире, икĕ çынна, çӳлти хутне йышăнсан та керменте пурăннă пек пулать… Аялти хута паянах хăвăр япаларсенчен тасатăр, ыран кунта пысăк çемьеллĕ рабочи вырнаçать», – тет Мишша. Ытлашши лаптăк пурри çинчен акт çыраççĕ те тухаççĕ комисси членĕсем».

Хăйĕн вырăсла çырнă аса илĕвĕнче Г. Кузьмин çав çыннăн должноçĕпе чăн хушаматне те палăртать, вăл облаçри çар комиссарĕ И.Ефимов пулнă, каярах çав çын Шемшер хресченĕсене пăлхав çĕклеме провокациленĕ. «Знаешь, Коля, – говорит Миша, – во время проверки склада конфискованного имущества я столкнулся с фактами преступления со стороны ответственных лиц, – Çеçпĕл каланисене аса илет Гурий Кузьмич. – Несколько дней назад пришел председатель облчека [И.Кадушин] и И.Ефимов. Первый забрал себе бобровую шубу и жене шубу из дорогого меха. Ефимов только жене, тоже из дорогого меха. Что Ефимов мог пойти на такие гадости, мне понятно, он готов, наверное, и на худшие гадости, но вот поступки предчека понять мне трудно. На мой взгляд, и до сих пор я в этом убежден, что в этом аппарате работают кристаллы неподкупной честности. Что теперь предпринять в отношении

этих грязных людей?» – спрашивает Миша. – «Что ты можешь сделать с ним? – отвечает Николай. – Арестовать их у нас с тобой нет прав, остается только довести до сведения обкома партии и ревкома. Можешь написать докладную на заседание ревкома и рассказать секретарю обкома».

Çапла тăвать те ревтрибунал председателĕ. Ларура облаçри çар комиссарĕ питĕ хытă шавланă иккен, поэта элекçĕпе танлаштарнă, ăна ĕçрен кăларса яма хистесе каласнă.

Çак ĕç хыççăн Çеçпĕл Мишшине облчекара тата облвоенкоматра ĕçлекенсенчен хăшĕ-пĕри питĕ курайман. Чи малтан кунта облчека председателĕн çумне, секретлă пай пуçлăхне И.Маркова асăнмалла. Шăпах çав çын Çеçпĕле арестлесе шăршлă та нӳрĕ путвалта асаплантарать, сăлтавсăр-мĕнсĕр уйăх ытла тĕрмере усрать, поэтăн мĕнпур шанчăк-ĕмĕтне хуçать, кун кĕнекисене вуласа унăн чунне тислĕкпе варалать... Поэта çав сынсем чăннипех вăрă-хурахăн курăнnă ĕнтĕ. Шăпах çавăн йышшисем Чăваш çĕршывне пăталаса йÿçĕ эрех ĕçтерессĕ, чăваш ирĕклĕхне тĕттĕм каспа витессĕ. Ефимовпа Марков – Шемшерте тăкăннă юншăн айăплă коммунистсем. Шăпах çав «пĕчĕк пилатсем» (Христоса Понтий Пилат пăталанине асра тытса калатăп) хушнипе хĕрĕх хресчене персе пăрахассĕ, тăвата çĕрĕшне арестлесе тĕрмере асаплантарассĕ.

Çеçпĕле çак асăннă тĕслĕхсем хуçмаллипех хуçассĕ. Вăл хайĕншĕн мар, чăваш халăхĕшĕн, унăн ирĕклĕ те тулăх пурнăçĕшĕн çунса-ĕмĕтленсе пурăннă, 1921 çулта вара Чăваш çĕрĕ, унăн чĕлхи çĕр çинче пĕтсе пынине пуçĕпех ĕненме тытăннă.

## «АСАП ТĂВĔ ÇИНЕ ÇАРУРАН...»

Çеçпĕле çывăх пулнă çын Н. Рубис ăна Аслă Асапланусăпа (Великий Страдалец) танлаштарнă: «Аслă Асапланусă – çапла калама хăятăп эпĕ: мĕншĕн тесен вăл унăн пурнăçне тĕрĕссĕн кăтартать. Михаил Кузьмичăн пурнăçĕ вĕçсĕр-хĕрсĕр асапланура иртрĕ-çке, чир-чĕрĕ, выçлăх, хаяр элек, телейсĕр юратăвĕ...» Хăйĕн пурнăçĕ Асап çулĕ çинче пулнине поэт аван ăнланнă. «Асаплану – ман пурнăçăн саккунĕ», – тесе çырать вăл А.Червякова патне 1921 çулхи акан 27-мĕшĕнче янă çырăвĕнче.

Асап çулĕ Çеçпĕле сарăмсăр вилĕм патне кăна мар, поэзири вилĕмсĕрлĕх патне те илсе тухнă. Асапланма пĕлни поэт чунне çĕкленĕ, çынсене юратма вĕрентнĕ. Асаплану Çеçпĕлĕн идеалĕсем чăн пурнăçринчен урăхларах пулнинчен те нумай килнĕ. Маларах çак трагеди пĕтĕм интеллигенци шăпинче палăрни çинчен каласа хăварнăччĕ ĕнтĕ. Ахальтен мар поэтăмăр НЭПа йышăнман, унăн идеалĕ Библири пек çынсен пĕрлĕхĕ пулнă. Çынлăха тĕпе хунă пĕрлĕхре чунсăрлăхпа чурăслăх валли вырăн пулман. Çеçпĕл вара шăпах та çавсене хирĕç тăма хал çитереймен. Поэтăмăра ытларах чунсăр чиновниксем хуçса ÿкернĕ. Хăйĕн пĕр çырăвĕнче вăл çапла çырать: «Чунсăр, суеçĕ çынсен аллинчи вылямалли тетте пек курăн-ха. Вĕсем кулнине, мăшкăлланине тÿс!.. Мĕн тери ансат пурнăç. Ниммĕнле вăрттăнлăх та çук. Йăлтах куç умĕнче». Çавăн йышши бюрократсене поэт «коммунизм чиновникĕсем» тесе йĕплет: çав çынсем пур чухне çутă малашлăха кайма май çуккине кăтартать: тăванлăх пĕрлĕхĕ пулмасса туйтарать.

Çеçпĕл идеалĕпе хирĕçӳлĕхĕ вăл Киев хулинче пурăннă тапхăрта тата та çивĕчленет. Ку вăхăт тĕлне унăн романтикăлăхĕ пусĕпех сĕвĕрĕлсе пĕтет. Пурнăç çине вăл выçăпа вилекенсен куçĕпе пăхать, ирĕклĕх, пĕртанлăх

идейисене шанма пăрахать. «Каллех пĕрисен чухăнлăхĕ те теприсен пуянлăхĕ, – ӳкĕнсе çырать поэтăмăр Ф.Пакрышень патне. – Хăрушă тĕлĕклĕ ăмăр кунсене çутăлтаракан çутă пайăрки ăçта-ши? Мĕн тери тертлĕ, мĕн тери йывăр».

Çав тапхăрта поэт хăйне хăр тăлăххăн туйнă. Çакă илсе кăтартнă çырăвăн малалли йĕркисенче те аван курăнать: «Федя! Ан ман мана! Çак тĕнчере эпĕ пĕр-пĕччен. Ют тăрăхра – ан ман мана. Пиччем пул маншăн. Вара мана асапланăвăма тӳссе ирттерме çăмăлрах пулĕ. Çапла пурнăç пурри çинчен малтан эпĕ шухăшлама та пултарайман».

Юлашки тапхăрта çырнă сăввисен айне Çеçпĕл «Манăçнă Мишша» (М.Забытый) тесе алă пуснă. Чăн та: ку тĕле хаклă çыннисем унăн çумĕнче пулман ĕнтĕ. Чи юратнă çынни – ашшĕ – çĕре кĕнĕ. Савнă тусĕ Нуся (А.Червякова), инçетре пурăнаканскер, хăй çинчен хыпар-хăнар туман т.ыт.те. Çапах та вăл хăй манăçа тухнăшăн мар, урăххишĕн куляннă. Çеçпĕл 1922 çулхи çуркунне алхаснă выçлăх çулне хăй нимĕнпе те пӳлейменнишĕн тăвăлнă. Н.Рубиса вăл ун чухне: «Эпĕ хама хам ытлашши туйсассăн, çак пурнăçран кайма хал çитерейĕп», – тенĕ имĕш. Выçлăха пула Атăл тăрăхĕнчен тарса килнĕ çынсене вырнаçтаракан инспектор пулнă май, вăл хăй çак çĕр çинче «ытлашшине» 1922 çулхи çĕртмен 15-мĕшĕнче ĕненсе лартнă. Çав кун пулса иртни ăна юлашки утăмне тутарнă. Çакăн çинчен Н.Рубис çапла аса илет: «А.Г. Свистельник ун чухне уездри çĕр пайĕн заведующийĕн Нестер Савченкăн пӳлĕмĕнче пулнă. Çав вăхăтра унта Михаил Кузьмич кĕнĕ те хăй çул çинче икĕ ачаллă чăваш хĕрарăмне курни çинчен пĕлтернĕ, – лешсем выçăпа касăлса вилес патнех çитнĕ: тин çеç çитнĕ те, ниçта та вырнаçма ĕлкĕреймен-ха – вĕсем валли çăкăр çыртарма ыйтнă вăл. Савченко килĕшмен: Михаил Кузьмич вара çапла каласа хунă: «Эппин, мана тивекен паека парсамăрччĕ, эпĕ алă пусма хатĕр». Савченко кăтăрса кайса кăшкăрнăран Михаил Кузьмич пӳлĕмрен чупсах тухса кайнă: тепĕр кунне вара унăн виллине тупнă».

Ку вăл фольклор варианчĕ. Чăннипе поэт Украина çыннисен хутне кĕни паллă. Савченко кăшкăрса тăкнипе кăна çырлахман ун чухне: Çеçпĕле ĕçрен хăтарнă тата тĕрмене лартассипе хăртнă пулнă.

Çеçпĕл хăйне тупăксăр, çаруран, «йытта пытарнă пек» пытарма ыйтнă иккен. Хăйне çакăн пек шеллеменнипе вăл революци тĕрĕслĕхне, унăн çирĕплĕхне çĕклесшĕн пулнă. Поэт хăй çине алă хуни унăн вăйсăрлăхне, халсăрлăхне кăтартмасть. Ку вăл поэтăмăрăн тĕрĕсмарлăхпа, чун чурăслăхĕпе кĕрешмелли мелĕсенчен чи юлашки те чи хăрушши: çын çав тĕрĕслĕхшĕн хăйĕн пурнăçне те шеллемест. Аса илер-ха чăвашсен ĕлĕк анлă сарăлнă «типшарне»: айăпланă çын халăх умĕнче хăйĕн чысне, ятне упраса хăварассишĕн тăшманĕн хапхи юпинчен çакăнса вилнĕ. Тĕрĕслĕхшĕн, таса ятшăн пурнăç та шел пулман. Çак шухăша Çеçпĕл çирĕп тытнă, çавна пулах пурнăçне трагедилле вĕçленĕ.

Çеçпĕл выçăпа вилекенсене пулăшма тăрăшнă, анчах та çав вăхăтра нимĕн те тăвайман. Тĕрĕслĕхшĕн пыракан кĕрешӳре халсăррăн курăнасси – уншăн чи хăрушши. Апла пулсан, – шутланă поэт, – çав лару-тăрура хăй çине алă хунипе çеç вăл çĕнтерӳçĕ пулса юлма пултарайĕ.

Эпир çакна ăнланма тивĕç: Çеçпĕл хăйĕн пурнăçĕпе кăна мар, вилĕмĕпе те мăнаçлă. Çынлăха, Чунлăха, Тĕрĕслĕхе тӳрре кăларассишĕн вăл хăйĕн çамрăк пурнăçне те, çырăнман сăввисене те шеллесе тăман. Акă вилес умĕн çырнă пĕр сăввине илсе пăхар. Унта сăваç хăйĕн халсăрлăхĕнчен Нуль ятлă сăнар туса çапла çырать:

*Чунăм савнă, юратнă Нуль,*
*Кураймастăп сана, ылханатăп.*
*Сана, уссăрлăха, саврăм пуль,*
*Эс анчах пуль мана пăталатăн.*

*Патăм пурăнăçа йăлт сана,*
*Ил ак— ывăс çинчех ман чĕремçĕм*
*Чĕрĕ, йăмăх юнпа пăсланать...*
*Ĕнтĕ ку— юлашки кучченеçĕм.*

Мĕн чухлĕ хĕрхенӳсĕрлĕх, юлашки вăй-хала пухса, шăла çыртса хăйне хăй айăплани. Чăн-чăн трагеди çыранĕ хĕрринче тăнă чухне каланă юлашки сăмахсем.

Çеçпĕл хăйĕн ĕмĕрне килĕшӳлĕх, гармони енне ăнтăлса ирттернĕ. Чи малтанах çав килĕшĕве вăл хăйĕнче курма ĕмĕтленнĕ. Хăй шухăшласа кăларнă идеала пăхăнтарса хăйне хăй туптанă сăвăç: çав идеалпа ӳссе пынă. «Çеçпĕлĕн «Эп» текенни пур енчен те лайăхланса ӳссе пынă... – çырать Н.Рубис П.Бекшанский патне. – Пурнăç чăнлăхĕ вара, вăл хăй ăнланнă тăрăх, унăн идеалĕнчен питех те инçетре тăнă...»

Çеçпĕл пурнăçа ĕмĕчĕ-шухăшĕ еккипе ярасшăн ăнтăлнă, анчах та вăхăт шунăçемĕн вĕсем икĕ еннелле пăрăнсах кайнă. Ку вăл, каланăччĕ ĕнтĕ, Çеçпĕлĕн тата унăн ӳсĕмĕн Пысăк Инкекĕ.

Поэтăмăр хăйĕнпе нихăçан та кăмăллă пулман. «Эсир, хитрисем тата çырăссем, – тесе çырать Çеçпĕл хăйĕн савнийĕ патне, – илемсĕр чăваш ачин шăпи мĕн тери инкеклине нихăçан та ăнланаймăр...» А.Свистельник аса илнĕ тăрăх, чăваш сăвăçи хăй Н.Рубиса савни, анчах та çак юрату телейсĕр пуласси çинчен пĕлтернĕ. Тĕп сăлтавне Çеçпĕл хăй вырăс мар пулнинче курнă иккен. Çав туйăм унăн «Юншăх» калавĕнче те вăйлă палăрать.

Çеçпĕл нацисен хушшинчи танмарлăха çивĕч туйма пултарнă, пĕр халăх теприне кӳрентерессинчен асăрханнă, хăранă та. Çакă вăл чăвашсем нумай ĕмĕр хушши наци пусмăрĕ, тĕрлĕ кӳрентерӳ тӳссе ирттернĕрен килнĕ ĕнтĕ.

Çеçпĕл хăйĕн çитменлĕхĕсене хаяррăн питлени вăл хăйне мĕскĕнлетнине пĕлтермест. Çапла майпа поэт хăйне çирĕплетсе, аталантарса пынă. Çакă вара унăн таса идеалне — пĕртанлăх тата ирĕклĕх шухăшĕсене — упраса хăварма пулăшнă.

Çапларах утнă Аслă Асаплануçă Асап тăвĕ еннелле, хăйĕн ирĕкĕпе, ĕмĕтри çутă тĕллевĕпе ырă идеалĕсене сивлемесĕр, хăйне шеллемесĕр (поэтăн «Паянтан» сăввине аса илĕр). Пирĕн умра — поэтăмăрăн чи юлашки сăн ӳкерчĕкĕ (А. Алимасов сăрăçă çак оригинала тĕпе хурса портрет çырчĕ, Çеçпĕлĕн çĕнĕ, пире паллă мар сăнне кăларчĕ). Варринче — Аслă Асаплануçă, вăл пăталанă турă ывăлĕн позинче тăрать (пуçне кăштах пăрса уснă). Мĕн çинчен шухăшлать çав хӳтлĕхсĕр, юр çинчи чĕрĕ çеçке пек черченкĕ чун. Тен, сăвăçăмăр хăйĕн хысĕнчи португейăллă, ăшă кĕреклĕ шыçмак çынсене Христоса Асап тăвĕ çине çавăтса каякан çар çыннисемпе танлаштарать. Пуçне вара çак йĕркесем аса килеççĕ пулĕ:

*Таврара хурахсем ахăраççĕ,*
*Тӳресем кăмăллăн кулкалаç.*
*Çаруранлă çĕршыв макăрать-çке,*
*Ун çине витĕнет тĕттĕм каç...*

Тинкеререх пăхатăн та ӳкерчĕкре Çеçпĕлĕмĕрĕн тĕп трагедине куратăн: поэт хăй — çутă та черченкĕ ĕмĕт, пĕрлĕхлĕх идеалĕ. Ун хысĕнчи ĕмĕлкесем — пурнăç чăнлăхĕ (тӳресен, хурахсен иртĕхĕвĕ, вĕсен чун чурăслăхĕ т.ыт.те). Вĕсем пĕр-пĕринпе хаяр тăшмансем. Кĕреклĕ эшкер çаруранлă Асаплануçа Асап тăвĕ çине çавăтса илсе каять. Унта вара вĕсем ăна пăталĕç: эрех-йӳçек ĕçтерсе мăшкăллĕç. Куçне хупас умĕн Асаплануçă хуллен ахлатĕ: хăйĕн юлашки сăмахĕсене калĕ: «Или! Или! Лама савахфани!» Еврей чĕлхинчен куçарсан вĕсем çапларах илтĕннĕ пулĕччĕç: «Турă-

çăм! Турăçăм! Мĕншĕн мана манса кайрăн?»

### «ХАЛĔ ÇĔНĔ ĂСЛАЙСЕМ КИРЛĔ...»

Çеçпĕлĕн илемлĕх концепцине идеал куçĕпе кăна пăхса ăнлантарма май çук. Кунта поэт хăй илемлĕ пултарулăха, сăмаха еплерех ăнланса курнине те, еплерех çĕнĕ ăслайсем енне туртăннине пĕлни те кирлĕ. Çав туртăмсем унăн тĕрлĕ тапхăрта тĕрлĕрен пулнă.

Поэт пултарулăхне çак тапхăрсене уйăрса пăхмалла: 1) Шăхасан тапхăрĕ (1917 çулхи çурлаччен), 2) Теччĕри малтанхи тапхăр (1917 çулхи авăн — 1919 çулхи çу), 3) Теччĕри кайранхи тапхăр (1919 çулхи çу — 1920 çулхи çурла), 4) Шупашкар тапхăрĕ (1920 çулхи авăн — 1921 çулхи çу), 5) Крым тапхăрĕ (1921 çулхи çĕртме — çурла), 6) Киев тапхăрĕ (1921 çулхи авăн — 1922 çулхи нарăс) тата 7) Остер тапхăрĕ (1922 çулхи пуш — çĕртме).

<u>Шăхасан тапхăрĕ.</u> Поэтăмăрăн ашшĕ вĕри те мăн кăмăллă, çав хушăрах ыттисене шанман, иккĕленекен çын пулнă. Ывăлĕ пĕтĕмпех ашшĕне хывать, ахальтен мар вăл уншăн чи хаклă çын пулса юлать. «Эп аттене мĕнле юратнине пĕлесчĕ Сирĕн... — тесе çырать поэт А. Червякова патне 1920 çулхи çĕртмен 2-мĕшĕнче янă çырăвĕнче, — пĕлесчĕ Сирĕн: пурнăçăн ăраскаллă та çутă тапхăрĕнче эпир унпа шухăшсем шухăшлаттăмăр, ĕмĕтленеттĕмĕр...»

Мишша хăйне ыттисенчен уйрăмрах тытма, çынсенчен ютшăнарах çӳреме пуçлать. Çын вĕлерекенĕн ачи ятпа çӳреме йывăр пулнă ĕнтĕ. Ывăлĕн ăшă туйăмĕ мораль-несĕппе хирĕçĕве кĕрет. Çеçпĕл Асап çулĕпе çакăнтан пуçласа утма тытăнать.

Çеçпĕл юлташĕсем тĕрлĕ приключени вулама юратнă, вăл вара ытларах Лермонтов, Некрасов, Кольцов сăввисене кăмăлланă. Юлташĕсем çăмăл юрăсем юрланă, поэт «Ямшăк арăмĕ», «Амăшĕн вил тăпри çинче» йышши юрăсене хисепленĕ, чăваш халăх юррисене шăрантарнă. Амăшĕ аса илнĕ тăрăх, пĕррехинче ăна ывăлĕ кĕнекерен хĕр йĕрри сăмахĕсене вĕрентнĕ иккен:

*Акăш вĕçсе пынă чух*
*Кам курать-ши урине?*
*Çич ют килне килсессĕн*
*Икĕ витре шыв ăсрăм,*
*Кам курать-ши ыррине?*

*Пусма вĕçне лартайрăм.*
*Ахах ятăм — путмарĕ,*
*Кĕмĕл ятăм — юхмарĕ.*

Шăхасанта вĕреннĕ çулсенче Мишша сăвăсем хайлама пуçлать, М.Лермонтовăн «Горные вершины» çеммине çывăх йĕркесем шăрçалать. Шăллĕ аса илнĕ тăрăх, пулас сăвăç вырăссен çак поэтне питĕ хисепленĕ, унăн «Мцыри» поэмине вара пĕтĕмпех пăхмасăр калама пултарнă. Çав çулсенче вăл вырăсла çырнă «Правила стихосложения» кĕнекене тишкерет, сăвăсем çырма вĕренет. Çак ĕçре вăл вырăс поэзийĕн традицийĕсемпе пĕрлех чăваш халăхĕн нĕрĕн тата илемĕн виçисене, хушăран тытăмне те ăша хывса пырать.

<u>Теччĕри малтанхи тапхăр</u> — поэтăмăршăн тĕнче культурин алăкне уçнă вăхăт. Ку тĕлĕшрен ăна пулăшаканĕ учительсен семинарийĕнче вĕрентекен В.Никаноров пулнă. Çак çын хăй вăхăтĕнче П.Коганпа П.Сакулин литературоведсен лекцийĕсене итленĕ, вĕсен шухăшĕсене йышăннă. Ун тăрăшăвне пула Çеçпĕл антика литературине, Чĕрĕлӳ, Çутлăх тапхăрĕсенчи литературăна пĕлсе çитет, вырăс романтизмĕпе классицизмне тĕшмĕртет.

1918 çулхи çуркунне поэт хăйĕн пĕрремĕш программа евĕрлĕ сăввине хайлать. Çак сăвва вăл вырăсла, силлабо-тоникăна тĕпе хурса çырнă. «Кузница» поэчĕсене çывăх сăнарсемпе усă курнă. «Пуласси», «Иртнĕ самана» сăввисене те вăл çав шкулăн традициллĕ сăнарĕсенех кĕртет. Хăш-пĕр

тĕпчевçĕ Çеçпĕлĕн çеçпĕллĕхне шăп та шай çак сăвăсенче курать, вĕсенче историзм вăйлине палăртать. Чăннипе çав сăвăсем поэтăн вĕренмелле çырнăскерсем. Сăвăç çав тапхăрта пролетари писателĕсен витĕмĕнче пулнă.

Теччĕри малтанхи тапхăр вĕçнелле поэт вырăс символизмĕ енне туртăнма пуçлать. Кунта В.Брюсов витĕмĕ те вăйлă пулнине палăртмалла. Ахăртнех, сăвăçăмăр А.Блок поэзине те пĕлнĕ. 1919 çулхи утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче вăл «Хĕрлĕ тинĕсре» ятлă тĕрлĕ символпа пуян сăвă пичетлет. Хĕрлĕ тинĕс — революци; карап — халăх, общество; Асап çыранĕ — иртнĕ пурнăç; Телей çыранĕ — пулас пурнăç т.ыт.те.

Теччĕри кайранхи тапхăр Çеçпĕлшĕн чи малтан поэзири харкамлăха аталантарнă вăхăт пек кĕрсе юлать. Çакă сăвăç А.Червяковăна юратма пуçланинчен те чылай килнĕ. Вăл туйăмлă лирик пулни унăн çав тапхăрти пĕрремĕш сăввинче курăнать.

*Çепĕç кулянăçлăн,*
*вĕçĕмсĕр хурлăхлăн*
*Хурлăхлă ĕмĕт ăшне*
*Эсĕр вăрăннă.*
*Сирĕн илемĕр тин çеç*
*куçран пăрăннă*
*Тĕлĕкĕн, çăлтăрăн*
*курăнчĕ уçăмлăн.*
***(Вырăсларан П.Хусанкай куçарнă)***

Çеçпĕлĕн тĕс символики чи малтанах туйăма романтика сĕмĕ çаптарнă. Ку тĕлĕшрен вăл А.Блока сывăх тăнă. Чăваш сăвăçин çав вăхăтри тĕп тĕсĕсем — хĕрлĕ, симĕс тата кăвак. Пĕрремĕшĕ вăл Революци, çын ăс-хакăлĕ, иккĕмĕш тĕсĕ — поэт, сăрăçă чунĕ. Кăвак тĕсĕ вара туйăма, юратăва пĕлтернĕ.

Тĕссене хисепленĕ пулсан та поэт сăвăра чи кирли сасă янăравĕ тесе шутланă. Ку тĕлĕшрен вăл В.Брюсов каланипе (сăвă — сасă пулăмĕ) пĕр шухăшлă пулни курăнать. Вырăссен теоретикĕ сăвă теорине ятарласа эвфони (сăвăри сасă йĕркеленĕвĕн вĕрентĕвĕ) тата мелодика (сăвăри сасăсемпе сăнарсен хăй евĕрлĕ çыхăнăвĕн вĕрентĕвĕ) пайсем кĕртет. Çав хушăрах вăл тĕрлĕ халăх сăввисен уйрăмлăхне чĕлхе уйрăмлăхĕсемпе ăнлантарать.

Çак ăслай вĕрентĕвĕсем В.Брюсовăн «Краткий курс науки о стихе» (М.,1919) кĕнекинче пурте пур. Çеçпĕл çав тапхăрта ку ĕçе тĕплĕн тишкерни паллă. Шăп çавăн чухне ĕнтĕ вăл чăваш тата тутар юррисенчи аллитерацие сăнать, çав мелпе малтанласа «Ака çинче» тата «Дорогая...» сăввисене çырать (1919 çул вĕçĕнче). Ун чухне сăвăç чăваш сăввисенче аçа састаш (мужская рифма) ама састашран (женская рифма) ытларах тĕл пулнине асăрхать; дактиль тата импердактиль виçеллĕ йĕркесен вĕçĕсем питĕ тухăççăр пулнине палăртать.

Шупашкар тапхăрĕ. Çеçпĕлĕн илемлĕх концепцийĕ çак тапхăрта çирĕпленсе, малалла аталанса пырать. Поэт çĕнĕ жанрсем, ăслайсем шырать, çĕнĕ тропсемпе усă курма пуçлать. Çакă вара çĕнĕ стильпе поэтика йĕркелеме май парать. Кунта вăл В.Брюсовăн «Смысл современной поэзии» статйинчи шухăшсене ăша хывни аван курăнать. Çеçпĕл вырăс теоретикĕн çав статьяри шухăшĕсемпе 1920 çулхи авăн уйăхĕнче хăй Мускава кайсан паллашнă. Шăп çав кунсенче В.Брюсов поэзи пирки лекци вуланă, унта вăл çĕнĕ вăхăт çĕнĕ хурăм (форма), çĕнĕ çемĕ ыйтни çинчен чылай каласнă. Çеçпĕлĕн тепĕр уйăх иртсен пичетленнĕ «Сăвă çырассипе ударени правилисем» статйин тĕп шухăшĕ те çавах. Тепĕр вырăнта сăвăç çапла çырса хурать: «Чăваш поэчĕсен малтан сăвă хурăмне тăвас пулать. Кивĕ хурăм, çич сыпăклă сăвă, чăваш поэзийĕнче ку таранччен патша пулса тăнă. Халĕ çĕнĕ ăслайсем кирлĕ. Çĕнĕ хурăм пултарас. Ку тĕрĕс çул, мĕншĕн тесен картина тăвас тесен малтан сăрă кирлĕ, çурт тăвас тесен чи малтан кирпĕч кирлĕ».

Брюсовпа Çеçпĕлĕн эстетика кон-

цепцийĕсем чылай чухне пĕр килеççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те символа сивлемен, çав хушăрах мистификацие йышăнман. Вĕсем сăнарсене тĕпе хураççĕ, тĕп шухăша палăртма та манса каймаççĕ. Вĕсем çĕнĕ саманапа çураçса тăракан çĕнĕ литература шкулĕ йĕркелес ĕмĕтпе пурăнаççĕ. В.Брюсов, сăмахран, тĕрлĕ юхăмри писательсене чăмăртама пуçлать, Пĕтĕм Раççейри писательсен союзĕн председателĕ пулать (1919-1921 çулсенче). Çеçпĕл те çав ĕмĕтсемпех çуннине унăн Н.Васанкка патне янă çырăвĕнче курма пулать («...Чăваша юратса тапакан чĕреллĕ çынсене пухса ушкăн тума кирлĕ пек туйăнмасть-и?»). 1920 çулхи çуркунне Хусанта вăл хăйĕн таврра чăваш çыравçисене пуçтарнă, литература ушкăнĕ тăвас ыйтусене хускатнă. 1921 çулхи çу уйăхĕнче те çав шухăшсене тĕпе хурса Шупашкарта доклад тунă, чăваш поэчĕсен сăввисене пухса кăларма пуçăннă.

1920 çулхи авăн-чӳк уйăхĕсенче Çеçпĕл чăваш сăввин тытăмне тĕпрен çĕнетме пуçăнать. Теори ыйтăвĕсемпе ĕçленисĕр пуçне хăйĕн программăллă сăввисене хайлать («Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине», «Чăваш арăмне»). Çак тапхăрта сăвăç наци ирĕклĕхĕпе çĕкленсе мăнаçланать, чăваш чĕлхин, культурин çутă пуласлăхне шанать: «Ку таранччен чăваш сăмахĕ илтĕнмен, — халĕ чăваш юрри илтĕнĕ: чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле сасси вырăнне пулĕ. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, çивчĕ пулĕ. Вăхăт çитĕ! Вăхăт çитĕ!»

1920 çулхи раштавăн 27-мĕшĕ. Çак кун Çеçпĕле айăпласа (юстици пайĕн çуртне юри вут тĕртсе çунтарнă тесе) 1921 çулхи нарăсăн 7-мĕшĕччен тĕрмере тытаççĕ. Çак тапхăр витĕмĕпе поэт «Йывăр шухăшсем» сăввине хайлать, малтанласа ирĕк виçеллĕ дольникпе çырать, калаçу интонацине тĕпе хурать.

1921 çулхи ака уйăхĕнче çырнă «Чăн чĕрĕлнĕ!» сăввине автор «Ирĕклĕ çырнă сăвăсем» тенĕ. Çак жанра сăвăç хăй çапла ăнлантарать: «Ирĕклĕ çырнă сăвăсем тесе стих тăршшĕнче (метр) умлăхыçлă ударенисем пур çĕрте те пĕр пек пыманнине калаççĕ. Çавăн пек сăвăсен стих тăршшĕ те пĕр пек мар. Вĕсем ытла кĕвĕллех мар вара».

Кунта поэт çак сăвă кĕвĕлĕхне силлабо-тоникăпа танлаштарса калани куç кĕрет. Çав çулсенче тĕрлĕ картлă (стопаллă) йĕркесенчен тăракан сăвва В.Брюсов «вольные стихи» тенĕ. Йĕркесерен тĕрлĕ картсем улшăнса пыраççĕ, тата вĕсен шучĕ йĕркесенче тĕрлĕрен пулсан ун пек чухне вырăс теоретикĕ çав сăвва «свободные стихи» тесе калать. Малтанхи сăвви çак системăн пĕр тĕсĕ иккен. «Чăн чĕрĕлнĕ!» сăвва Çеçпĕл шăп та шай çак кӳлепене тĕпе хурса хайлать (вырăнăн-вырăнăн вăл силлабо-тоникăн виçисене те кĕртсе ярать).

Çак тапхăртан пуçласа чăваш сăввин теоретикĕ силлабо-тоникăсăр пуçне ирĕклĕ сăввăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе усă курать. Кăшт каярах, «Кĕпер хывăр!» сăвва хайласа, поэт чăваш поэзине французсен верлибрне (ирĕклĕ сăввăн тепĕр тĕсне) кĕртет. Эппин, Çеçпĕле чăваш сăввин реформаторĕ тенĕ чухне пирĕн силлабо-тоникăна аталантарнине çеç мар, поэзие ирĕклĕ сăвă тĕсĕсене кĕртнине те асра тытмалла. Çеçпĕл вăл е ку сăвă системине хăйне уйрăммăн савман. Сăвă кӳлепине вăхăта тата поэт туйăмĕн юхăмне кура суйламалли уншăн пĕр иккĕленӳсĕр пулнă. Революци чĕнĕвĕ марш евĕрлĕ тикĕс те «хыт утăмлă» сăвă ыйтнă пулсан, шухăшлă, трагедиллĕ йĕркесем ытларах ирĕклĕ сăвă виçипе çырăннă. Ун пек чухне сăвăç вĕрӳ-суру тата ылхан сăмахĕсемпе те усă курнă.

<u>Крым тапхăрĕ.</u> Çак тапхăрта поэт литература классикине кĕрсе юлмалли ултă сăвă хайлать: «Инçе çинçе уйра уяр...», «Катаран каç килсен...», «Шăршлă каç йывăрри...», «Чăваш! Чăваш!..», «Çĕн Кун аки» тата «Тинĕсе». Ку тапхăра Çеçпĕл пултарулăхĕн

тўпи тесе хакламалла. Енчен те эпир «Çĕн Кун аки» тата «Тинĕсе» сăвăсене классика шайне лартса пăхатпăр пулсан, çав рете ыттисене те лартмалла. Малтанхи виçĕ сăввине автор çĕртме уйăхĕнче вĕрў-суру чĕлхине çывăхлатса çырнă. Çав хайлавсенче сасă выляв-ĕпе магийĕ питĕ вăйлă. Утă уйăхĕнче çырнă сăвăсем вара символсемпе тата метафорăсемпе пуян (Çĕн Кун аки пуçĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри, ылтăн ака пуç, сар-хĕрлĕ кантăк, кăварлă ывăç, ылтăн сўре т.ыт.те). «Тинĕсе» сăвви поэтăмăрăн чи вăйлă сăввисенчен пĕри. Унта поэт сасăпа тĕс урлă тинĕс кĕрлевне кăтартса илттерме пултарнă. Тĕслĕхшĕн, икĕ йĕрке çеç илсе пăхар: «Хуп-хуран, сип-симĕссĕн, Кăпăк тумлăн, хумлăн-хумлăн...» Акă инçетрен хура хумсем килеççĕ, çывхарнă май вĕсем симĕссĕн курăнаççĕ, çырана çапăнса шурă кăпăкăн саланаççĕ. Сăвăра тĕл пулакан кĕр, хăр, кар, хумпăр сăмах пайĕсем шыв кĕрлевне, хум çырана пырса çапнине илтĕнтереççĕ. Крым тапхăрĕнче Çеçпĕл хăйĕн малтанхи илемлĕх принципĕсене аталантарса вĕсемпе сăвă çырнă чухне ăнăçлă усă курать. Çак тапхăрта сăвăçăн харкамлăх ăнĕ ушкăнлăх ăнĕпе килĕшўллĕн çураçать. Хăйĕн сăпатне çĕклени поэта миллион чăваш ячĕпе калаçма чăрмантармасть. Халăхăмăра вăл сăмах асамлăхĕпе асамлать, ăру тĕперĕ-мăчаварĕ пек йыхăрать, сăввисемпе чĕлхемĕр ăсти-вĕрўçи пек çунтарать.

<u>Киев тапхăрĕ</u>. Çак тапхăр пуçламăшĕнче çырнă «Хурçă шанчăк» сăвăра Çеçпĕлĕн оптимизмĕ пысăк пек-ха. Çав хушăрах «Çук, çук» теекен улталанĕ, кам «çук» тет, ун чунĕ чăлах» тени виçĕ хут тĕл пулни ăнсăртран мар. Поэт ăшĕнче иккĕленў йăшăлтатнă. Çакă пурнăç чăнлăхĕ сăвăç идеалĕнчен инçетрен инçетелле тарса пынипе çыхăннă.

Хĕле кĕнĕ май выçлăх та алхассах пынă. Тепĕр уйăхран чăваш сăвăçи «Выç псалом» хайлать, унта Çĕршыва пăталани çинчен малтанхи пек иртнĕ вăхăтра мар, хальхи вăхăтпа çыхăнтарса каланă. «Çĕршывăм вилсе выртнă вăхăтра эпĕ Украина улăхĕсем тăрăх çухалса çўретĕп, — тесе çырать вăл 1921 çулхи раштав уйăхĕнче «Канаш» хаçат редакторĕ патне. — Мĕн пур шухăшăм тăван çĕршывăм çинчен кăна, çак выç самана асапĕ çĕршывăма сарлака çĕр пичĕ çинчен пĕтĕмпех шăлса çухатнă-ши, эпĕр — çĕршывран саланса пĕтнисем — ĕмĕрех çуралнă çĕршывсăр, хамăра çуратнă халăхсăр тăлăххăн тĕнче тăрăх сĕтĕрĕнсе çўрĕпĕр-ши тесе шухăшлатăп кунĕн-çĕрĕн...»

Савăнăçлă марш вăхăчĕ хыçа тăрса юлнă. Вăхăт поэтран çĕнĕ сăрă-сăнар, çĕнĕ туйăм, çемĕ ыйтнă. Кĕвĕллĕ йĕркесем арканаççĕ, вĕсен вырăнне шухăшлă шăплăх е тарăхуллă кăшкăруахлату йышăнать. Çаксем пурте «таканлă» силлабо-тоникăна такăнтараççĕ. Çеçпĕле верлибр енне туртаççĕ («Кĕпер хывăр!»).

<u>Остер тапхăрĕ.</u> Поэтăмăрăн çак тапхăрта вырăсла çырнă сăввисенче имажинизм витĕмĕ вăйлă палăрать. Çав юхăм вырăс поэзийĕнче 1919 çулта вăй илнĕ, унта икĕ тĕп ушкăн пулнă: сулахайрисен ушкăнĕ (Шершеневич, Мариенгоф) тата сылтăмрисен ушкăнĕ (А.Кустиков, С.Есенин). Сулахайрисем сăнара шухăшран маларах лартнă, сăвва «сăнарсен каталогĕ» вырăнне хунă. Сылтăмрисем сăнара хисепленĕ, çапах та вăл хăйшĕн мар, шухăша уçса парассишĕн кирлине палăртнă.

Çеçпĕл сылтăм имажинистсен енче пулнă. Çак юхăма вăл чи малтан Есенин витĕмне пула кĕрсе кайнă. Поэтăмăр Мускавра В.Брюсов докладне чăннипех те итленĕ пулсан унта вырăс теоретикĕ «имажинист Есенин» тенине тăнласа юлнах ĕнтĕ. Çав каç вырăссен аслă поэчĕ хăй те тухса калаçнă. Есенин пултарулăхĕпе Çеçпĕл Шупашкар тапхăрĕнче тĕплĕн паллашнă, унăн

сăнар системине çывăх сăнар тытăмĕ йĕркеленĕ. Ку вăл вĕренӳ мар, пултарулăхри пĕр танлă тупăшу-диалог пулнă. Çапла майпа пирĕн поэзие Çеçпĕл урлă сылтăм имажинизм юхăмĕ кĕрсе пынă. Каярах çав юхăма В.Рсай, П.Хусанкай тата В.Митта аталантараççĕ. С.Элкер вара ытларах Çеçпĕлĕн хресченсен çĕнĕ туртăмне (новокрестьянское направление) çывăх сăввисен çулĕпе каять, çавна май «Хурçă карап» йышши сăвăсем хайлать. 30-мĕш çулсенче Çеçпĕл традицийĕн пĕр вуллине (имажинизм туртăмлине) пусĕпех касса пăрахаççĕ, унăн вĕренекенĕсене нормăланă эстетика çулĕ çине кăларма хăтланаççĕ.

Çеçпĕлĕн илемлĕх концепцийĕ, куртăмăр ĕнтĕ, тапхăрсерен улшăнса, аталанса пынă. Сăвăç халăх сăмахлăхĕпе те кăсăкланнă, вырăс тата тĕнче литературипе те интересленнĕ, тĕрлĕ литература шкулĕсен, юхăмĕсен вĕрентĕвĕсене аван пĕлнĕ. Вĕсемпе вăл хутшăну-диалога кĕрсе тупăшнă, чăваш поэзийĕн анине çĕнĕ вăрлăх акнă.

«Кĕпер хывăр!» сăвва Çеçпĕл 1921 çулхи юпан 30-мĕшĕнче çырни паллă. Унăн ку вăхăтри шухăш-кăмăлне çав кунхине Ф.Пакрышень патне янă çырăвĕнчен пĕлме пулать. «Хальхи вăхăтра пурăнма мĕн тери йывăр, — тесе çырать вăл хайĕн украин тусĕ патне. — Кунĕн-çĕрĕн шăв-шав, тавралла кăнттам та чунсăр салтаксем. Хама тăр пĕччен пек туятăп. Пыйтă тавраш. Сивĕ çанталăк. Кунсерен ассах пыракан вылăх. <...> Каллех пĕрисен чухăнлăхĕпе теприсен пуянлăхĕ çитрĕ».

Çак çырурах кирек хăш самантра çывăх çынна таптама хатĕр «пуç мимисĕр салтаксемпе çынсен кĕтĕвĕ» пирки асăнни пур.

Халĕ сăвă патне таврăнар. Унта кĕпер урлă каçаканĕсем (пуласлăха çитекенĕсем тесе ăнланмалла) тимĕр уралла (такан атăллă салтаксем тесе ăнланмалла) тата чул чунлă. Тĕрĕссипе вĕсем маларах асăннă кĕтӳ çыннисем. Лирика харкамçи çав «паттăррисен» шутне кĕмест, мĕншĕн тесен вăл чунлă, куçĕ куççуль кăларать. Ыттисем пек «вилесем урлă, шăмă куписем çинче» кĕпер чĕнтĕрлеме, халсăррисен чĕрисем çине хăюллăн таптама пултараймасть вăл.

Камсем пулĕç-ши çав «хĕвеллĕ ыран енче»? Паллах, лирика харкамçи йышшисем мар. Апла пулсан унта кĕпер хывса каçма, çавăнта çитессишĕн çынлăха, чунлăха пĕтерме кирлех-ши? Автор хăрушă та тискер ӳкерчĕк тăвать, сăвă йĕркисене хуçать, вăй-халĕ пĕтсе çитнĕ харкамçа суя оптимизмлă сăмахсем калаттарать.

Хăйĕн пултарулăхĕпе Çеçпĕл Мишши чăваш поэзине тепĕр шая çĕклеме пултарнă. Унăн сăвă поэтикинчи çĕнĕлĕхĕсем лирика харкамçин сăнарĕпе, пĕтĕмĕшле хавха-çĕкленӳпе çураçăнма пултарнă. Наци чĕрĕлĕвĕн идейи унăн яланах малта тăнă, уншăн чи хакли те пĕлтерĕшли пулнă. Хăйĕн сăввисенче сăвăç сăмах пиçĕлĕхне тĕрĕсленĕ, çăра метафорăсем, илтĕнекен тата тĕрлĕ тĕслĕн курăнакан сасăсен пĕрлĕхне йĕркелеме пултарнă. Халăхăмăрăн пинпин çул пуçтараннă сăмах мехелĕ Çеçпĕл умĕнче кăвак хуппин уçăлнă. Чăваша тĕнпе тĕрлĕ политика партийĕсем мар, чи малтан унăн хăватлă чĕлхи çăлăнăç кӳрессе вăл пĕтĕм чунтан-вартан ĕненнĕ. Унăн ĕненĕвĕн хĕрӳлĕхне, вăй-хăвачĕн çирĕплĕхне эпир паян та туйса-курса тăратпăр. Çав ĕненӳ пире чăваш пулма пулăшать, тĕнчене чăваш ятпа тухма йыхăрать. XXI ĕмĕр вăл пĕтĕмпех Çеçпĕл ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмелли самана пулĕ.

## ÇЕÇПĔЛ ПРОЗИ

Çеçпĕл Мишшине эпир ытларах сăвăç пек пĕлетпĕр. Унăн прозăпа çырнă хайлавсем те пур. Тĕслĕхрен, 1918 çул пуçламăшĕнче «Хыпар» хаçатра сăвăçăн «Çапла пулăшатпăр-и?» тата «Пирĕн вăй» ятлă статйисем пи-

четленеççĕ. 1918 çулхи кăрлачăн 5(18)-мĕшĕнче çав хаçатрах («Чăваш пурнăçĕ» ярăмра) Çеçпĕлĕн тепĕр хыпарĕ кун çути курнă. Унта вăл хăй Хусантан Шăхран (хальхи Канаш хулин малтанхи ячĕ) станцине çитни, унта чăваш салтакĕсемпе пĕрле калаçса ларни çинчен хыпарлать. «Пит те тĕлĕнсе эпĕ савăнтăм чăваш тăванăмăрсем çине пăхса, — хавхаланса пĕлтерет Касаккасси каччи, — ĕлĕк çакăн пек станцисенче чăвашсен сассисем илтĕнместчĕç, вăрттăн анчах кĕтессенче пĕрпĕринпе пăшăлтататчĕç. Халĕ пит аван хамăр чĕлхепе калаçса савăнса кулкалаççĕ».

Çеçпĕл çав салтаксене чăваш хаçачĕн тăватă номерне вуласа парать, чăвашла утмăл кĕнеке сутать.

<u>«Çапла пулăшатăр-и?»</u> ятлă статьяра Çеçпĕлĕн сăнар тăвас ăсталăхĕ уçăмлах паллă. Малтан вăл йывăр саманан тĕп палли — выçлăх аптратни — çинчен асăнса илет, унтан Шĕкĕр ялĕнче хăй илтнĕ калаçусене çырса кăтартать: «Çамрăксем улахсенче, ваттисем те халăх çинче калаçаççĕ:

— Вăрçăра салтаксем кунне çуршар кĕрпенке анчах çиеççĕ. Хуласенче çимĕç çук! — теççĕ.

Кăрчамасем ĕçсе ларнă чух та кăна çавартан пăрахмаççĕ. Пĕр-пĕр çамрăк салтак арăмĕ те ĕçкĕре кукăркаланса:

— Юлташăм хăçан таврăнĕ-ши, выçă вилмесен юрĕччĕ! — тесе юрлать».

Малалла автор Шĕкĕр çыннисем хăйсен мăкаçей тыррине (халăхран вăрлăх валли пухнă тырра) выçă салтаксем валли илсе каясран хăраса килрен-киле валеçсе тухни çинчен пĕлтерет. Тырă валеçсе ăшĕсене хыптарнăскерсем сĕлĕ сутса сăра илеççĕ те «çĕрĕпех янраса, кăшкăрса лараççĕ» иккен.

Малалли ӳкерчĕк татах та витĕмлĕрех: «Пуянни те, чухăнни те ĕçкĕ тăвать. Тăлăпли те ĕçет, çĕлĕкĕ тăрри çĕтĕкки те кая юлмасть, çын сиккипех сикес тет. Çĕрле урамра яшсемпе чупакан, упăшкасăр ача тунă салтак арăмĕсен, ӳсĕрсен юрри ыйăхлă ял тăрăх ян ярать, аякра, ял вĕçĕнче, тӳпелешсе хаяррăн шуйăхни илтĕнет».

Малалла автор хирĕçле сăнар калăплать, нӳрлĕ окопсенчи выçă салтаксем çинчен каласа парать. «Киле килме тухнă салтаксем выçă вилеççĕ; хуласенче пирĕн пек чунлă çынсемех выçăпа вăйран кайнă, ачасем ĕсĕклесе йĕрсе улаççĕ...» — хирĕçле ӳкерчĕк тăвать автор. Унтан вăл каллех Шĕкĕр ялне сăнлать. «Ватти-çамрăккисем ӳсĕрĕлсе: «Кăрчама тăвакана турă сывлăх патăр», — тесе юрра яраççĕ».

Вĕçĕнче çыравçă риторикăн ыйту мелĕпе усă курса вулавçăран çапла ыйтать: «Савнă чăваш, çапла пулăшатăн-и эсĕ выçă вилекен тăванна?.. Ывăлу çăкăр ыйтсан чул анчах паратăн-и?» Юлашкинчен чунĕ кӳтсе çитнĕрен вăл çапла тарăхса калать: «Эх, выççа тутти мар, выççи анчах паллать пуль!»

«Пирĕн вăй» статьяра Çеçпĕл чăваша ытти халăх мăшкăл ан кăтарттăр тесен мĕн-мĕн тумалли пирки шухăша путать. Чăваш тĕп хысни (хáльхилле — казначейство) тусан чăвашсем влаçа хăйсен аллине илессе шанать вăл. Малалла каллех çав «мăшкăлу мотивĕ» палăрать: «Пирĕн тĕттĕм пӳртсене те вĕренӳ çути кĕрсе çутатса ярĕ. Вырăсмĕн мăшкăлласан çĕлĕке пусса лартса, пуçа чиксе чĕлхесĕр выльăх пек сăмахсăр пулмăпăр...» Тепĕр тăватă предложенирен каллех çав кĕвĕллĕ сăмахсем тĕл пулаççĕ: «Кирек ăçта тухсан та чăваш тăлăххăн, мĕскĕннĕн хăраса çӳремĕ. Тин вара çунса, ялкăшса чăвашăн кĕтнĕ Хĕвелĕ тухĕ те Чăваш çĕрне, нумай асап курнă çĕре, хăй çуттипе ачашласа, çутатса ярĕ!..»

<u>«Пирĕн вăй»</u> статья, тĕрĕссипе каласан, чăваш интеллигенцийĕн революци вăхăтĕнчи программăллă манифесчĕ вырăнне пулнă.

Тутарсем ун чухне уйрăм çар, хăйсен тӳре-шарине тăвасшăн çуннă, наци республики йĕркелеме ĕмĕтленнĕ.

Чăвашсем мал ĕмĕт еннех туртăннă. «Кун пек кутсăр-пуçсăр саманара, пĕтĕм вырăс халăхĕ урса кайнă чух, пирĕн, чăвашсен, хамăр юратнă пуçлăхсенчен чăваш тӳре-шари тусан, питĕ аван пулĕччĕ, — чăваш ĕмĕтне палăртать Çеçпĕл Мишши. — Вырăс кăларнă йĕркепе мар, хамăра килĕшекен йĕркепе пурăнасчĕ. Вырăссем халь хамăр укçанах пире кирлĕ çĕре парасшăн мар пулсан, пирĕн куланай укçине вырăс аллине ăсатас марччĕ, хамăр пĕлнĕ пек, вырăссенчен ыйтмасăр, усăллă çĕре ярасчĕ. Чăваш пулкки (полкĕ — В.Р.) тăвасчĕ».

Вĕсене (Тĕп хыснана, полка) тытса тăма кашни чăвашран пĕрер тенкĕшер те пулин куланай (хырăç) пуçтарма сĕнет поэт. Вара ирĕклĕ чăвашсем кăткăсем пек тăрăшса та канлĕн ĕçлĕç, шкулпа чиркӳре те, хулапа ялта та чăваш чĕлхи янăраса кăна тăрĕ тесе ĕмĕтленет Çеçпĕл Мишши.

<u>«Вăрман ачисем».</u> Хайлава Çеçпĕл çичĕ сыпăка пайланă. Вăл кино сценарийĕ пекрех монтажлă пулса тухнă. Кашни сыпăк уйрăм кадрсен ушкăнне аса илтерет. Çакна хайлав пуçламăшĕнчех туйса илме пулать: «Йĕри-тавра сĕм вăрман. Çил улать, йĕрет. Вăрман хĕрринчи сăрт çинче ватă юман хаяррăн шатăртатса ларать; сăрт айĕнче çырма хĕрринче пĕчĕк лаçсем сапăнса ларнă. Ухилле мучи кил картине çӳллĕ хӳмепе хӳсе çаварнă; кил варринче пĕчĕк чӳречесемлĕ хура пӳрт ларать».

Çыравçă кунта чăвашăн ĕмĕртенĕмĕре куçса пынă мифологилле тĕнчине ӳкерсе кăтартнă. Хайлав ятĕнче палăртнă вăрман ачисем — сăрт айĕнчи çырма хĕрринче пурăнакан чăвашсем. Вĕсем ку таранччен сăрт çинчи киремет хӳттинче пурăннă, халĕ вара ăна мана пуçланă иккен. Çакна эпир автор ватă Ухилле шухăшне каласа панинчен пĕлетпĕр: «Эх, самана, самана, ваттисен йăлине пăраха пуçларĕç. Эй, авал халăх карласа кашни çĕн уйăхăн ватă юман патне пуçтăрăнатчĕ, халь çулталăкра пĕр-иккĕ пуçтарăнкалаççĕ. Манчĕç сана, аслă Киремет, манчĕç!»

Чăваш хăй тĕнчинче хăйне тĕреклĕ те çирĕп туйнă. Çакна автор Çăлтăр (ку ята вĕççĕрлĕхĕн, Пысăк Вăхăтăн, пĕтĕмĕшле каласан, Космосăн символĕ тесе ăнланмалла) ятлă качча юрланă юрă урлă та систерет:

*Э-э-эй! Авал паттăр*
*Атăл пулнă тет...*
*Маттур паттăр*
*Атăл пулнă тет...*
*Ашшĕ пулнă тет*
*Э-э-эй! Ырă киремет.*

Хайхи сăрт çинчи аслă Киремет сăнарĕ историре пулнă Атилла (V ĕмĕрте пурăннă хунсен патши) ашшĕн сăнарĕпе пĕрлешсе кайрĕ. Кунта Çеçпĕл Мишши Турхан Энтрин «Чăваш историйĕ» ятлă очеркне (вăл «Хыпарта» 1917 çулта пичетленнĕ) вулани, унти хăш-пĕр фактсемпе усă курни сисĕнет. Унта çапла йĕркесем пур: «Атăлăн ӳтне унăн халăхĕ кĕмĕл тупăк ăшне хурса, Дунай шывне пĕвелесе чавса вăхăтлăха урăх çĕре ярса, шыв тĕпĕ типсен çавăнта чавса пытарнă тет. Унтан пĕвине татса шывне хăйĕн вырăнне ярса савнă пуçлăхăн ӳтне шывпа витнĕ тет».

Çеçпĕл хайлавĕнчи Çăлтăрăн юрри акă мĕнле сăмахсемпе вĕçленет: «Вилнĕ вăрçăра Çапăçнă чухне, Пытарнă ăна Ылтăн тупăкпа Тинĕсĕн тĕпне».

Çапла вара Çăлтăр чăвашсен авалхи паттăрлăх вăхăтне, халăхăн мухтавлăхне аса илсе юрлать. Çеçпĕл ятлă çамрăкăн юрри вара вăрманпа тата шăпчăк кайăкпа çыхăннă: «Шăпчăк, шăпчăк, Пĕчĕк кайăк, Тарам пĕчĕк пулсан та Мăн вăрмана ян ярать».

Çак сăмахсен вăрттăнлăхне пĕлме каллех Э.Турханăн «Чăваш историйĕ» очеркне пăхса илме тивет. Унта тутарсем мĕнпур пăлхар çĕрне тытса илни çинчен калакă хыççăн çапла çырни пур: «Хайхи пăлхар çĕрĕнчи сĕм вăрмансем пăлхарсене нумайăшне тар-

2-08258-2

са пытанма вырăн пулнă. Çав сĕм вăрмансем, пуринчен те ытла Атăлтан хĕвел анаçĕнчи Сăр вăрманĕ, телейсĕр мĕскĕн чăваш халăхне хăйĕн йывăç çулçисем айне пытарнă. Тутарсем пыра пуçласан, ян-ян кайсан чăвашсене инкек çывăххине систерсе тăнă. Тутарĕсене çулçисемпе çупса, пăшăл-пăшăл туса «чăваш çук» тесе суйса янă. Тутарсем иртсе кайсан тин хура вăрман шăпчăкĕсем хăйсен хаваслă юррисене юрласа шăши чĕреллĕ чăваш халăхне вăрмантан тухса пĕр хăрамасăр ĕçе тытăнма чĕннĕ.

Тавтапуç сана, сĕм вăрманăм!

Эсĕ тĕнчере пулман пулсан, ху çулçупа ман асаттесене тăшмансенчен çăлман пулсан çут тĕнчери хӳхĕм кунсене эпĕ те, чăваш, кураймăттăм, хам пуçăма çӳле тытса чăваш ятне йăтаймăттăм. Чăваш тесен чĕре ăшшăн хавасланса выляймĕччĕ. Хам халăхăн чыс-чапĕшĕн чунăм çунса вĕреймĕччĕ. Тавтапуç сана!»

Эппин, шăпчăк мăн вăрманта юрлани вăл халăха ĕçе йыхăрнине, сыхăхра тăшмансем çуккине пĕлтернĕ. Сĕм вăрман – чăвашăн çăлăнăçĕ, хӳтлĕхĕ. Çăлтăр юрри чăвашсен паттăрлăхне аса илтернĕ терĕмĕр. Çеçпĕл ятлă çамрăкăн юрри вара Сăр вăрманĕсенче хӳтлĕх тупнă шиклĕ чăвашсен вăхăтлăх хавхалану юрри. Çак тапхăрта (XIII–XIX ĕмĕрсенче) чăваш халăхĕ, Э.Турхан калашле, «шăши чĕреллĕ» пулса тăнă. Çеçпĕл Мишши çак хăравçăлăхпа мăшкăлу мотивĕсене пĕрлештерсе хирĕç тăруллă фабула йĕркелет. Йăх пуçĕ Ухилле хăйĕн ывăлĕсемпе ял халăхне Киремете маннăшăн ӳпкелет. Унăн «ĕçлĕхсĕрленсе выртма» юратакан Сӳхепи ятлă ывăлĕ ашшĕне çапла сăмахсемпе вăрçать: «Ват супнă, киремет, киремет. Акă вырăссем шăнкăравсемпе шанкăртаттарса килсен куланай ăçтан тупса парăпăр-ха? Чӳк тăвас, çырлахтарас! Тиек хулăпа çунтара пуçласан – чӳк тăвăн – лайăх!»

Кунта Сӳхепи шикленни, куланай пухакан вырăссенчен (каярах мĕнпур вырăсран) хăрани курăнать. Çапах та вăл хăйĕн тĕнче касса çӳрекен Микур вăртахĕн сĕнĕвĕпе килĕшет, вырăс хушшине чукун çул хывнă çĕре ĕçлеме кайма пулать. Хăйĕн хăтланăвне çапла ăнлантарать вăл: «Шутласан каймалла пек те туйăнать. Часах выçă лармалла пулĕ. Çăвар нумай – тырри пулмасть. Кайăксем Атăлтан леш енне куçнă тет атте. Ăçтан этем пулас! Кайсан лучçĕ!»

Вунă чăваш инçе çула тухма хатĕрленет. Ĕç ăнăçмасси малтанах сисĕнет. Ваттин пилне илес вырăнне Сӳхепи ашшĕпе харкашать, вĕсем вырăс тиеке кирлĕ хутсем тутарнăшăн икĕ тилĕпе пĕр юпах тиха «парнелеççĕ». Эртеле хăравçă та çапкаланчăк Микур ертсе кайни те йĕркеллĕ мар пек. Сăр шывĕ хĕрне çитнĕ-çитменех вĕсен икĕ лашине вырăссем ăна пулă туртса илеççĕ. хĕнесе тăкаççĕ. Ирĕке тухсан Микурĕ çапла каппайланса илет: «Юрать хам вырăсла пĕлеп. Эп пулман пулсан хупса лартатчĕç-ха!»

Малалла та ăнса пымасть тăван ялĕнчен инçетелле кайса пыракан чăвашсен. Малтан Шăнкăрча, унтан Çеçпĕле çухатаççĕ. Кайран Микур пĕр лаша çине утланса эртеле пăрахса тарать. Халĕ тин ĕнтĕ Сӳхепи ашшĕн сăмахĕсене аса илет. Автор çав саманта кĕскен çырса кăтартать: «Сӳхепи чĕрине хуйхă кĕрсе çунтарса ячĕ те аякри аслă вăрман, ял, аслă Киремет аса килсе кайрĕ. Сӳхепи вăрмана кĕчĕ те пĕр йывăç умне чĕркуçленсе кĕлтăва пуçларĕ».

Эртел каялла тарать. Вĕсене вăрă вырăнне хурса вырăссем хăвалаççĕ. Çав самантра автор харкамçă куçĕпе курăмлăн сăнланă: «Акă Сӳхепи умĕнче улăх варринчи утă куписем çаврăнса кайрĕç... Пур япала та çаврăнса кайрĕ. Ун çумĕнче Паккайпа Тăмпа лашисем çинчен ывтăнса кайрĕç. «Эй, Турă!» – тесе сехĕрленни илтĕнсе кайрĕ. Тяккапа Маккан айĕнче лашисем йăванса кайрĕç. Сӳхепи вĕсен урлă сиктерсе

кайрĕ, лешсем лашисен айĕнче харлатса юлчĕç. Лайăх курать Сӳхепи — Сăр урлă Тимккапа Çăлтăр ишсе çыран хĕрне çитеççĕ».

Сӳхепи те хăй шыв урлă каçса хăтăласса шанать, лаши-качки Сăр шывне сикет. Вăл вилнĕ саманта автор сăнарлăн çырса кăтартать: «Курать — икĕ вырăс ăна çыран çинче пăшалпа тĕллесе тăраççĕ. Пăшал сасси илтĕнмест; пăшал вĕçĕсенче тĕтĕм курăнчĕ те Сӳхепи тавралла шыв хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕ. Лаши те, Сӳхепи те çаврăнса юхăмпа пĕрле кайрĕç.

Пĕлĕт тап-таса, кăн-кăвак, пĕчĕк пĕлĕт татăкĕсем çинче хĕп-хĕрлĕ хĕлхемпе хĕвел вылять. Юхса пырать Сӳхепи, ун умĕнче хăйĕн ачисем чупса çӳреççĕ; ашшĕ, ватă Ухилле, тырă вырать. Сăрт çинче ватă юман кашласа ларать...»

Сӳхепи хăйĕн йăнăшне — Киремете манма юраманнине — кая юлса ăнланчĕ. Вĕсем çапкаланчăк Микур хыççăн кайса хăйсен пуçĕсене хăйсемех çиреç. Ку кăна-и-ха? Тимккапа Çăлтăр тăван ялне çитсессĕн сăрт çинчи аслă юман çилпе хуçăлса выртнине кураççĕ. Шурă сухаллă Ухилле те ывăлĕсем вилнине пĕлсен симĕс курăк çине кайса ӳкет. Çакăнпа хайлав вĕçленет, анчах та вулавçă çав ватă çын урăх тăраймасса пĕлет, мĕншĕн тесессĕн ял чăвашĕн тĕрекĕ — сăрт çинчи аслă юман — тӳнсе выртнă.

Хайлав идейи тĕрлĕ халăха хирĕçлетнинче мар, чăваша истори харкам хупăнчăклăх (самоизоляция) патне илсе çитернин синкерлĕхне кăтартнинче. Çав шухăш Çеçпĕлĕн Э.Турхан очеркне вуланă хыççăн тĕвĕленни иккĕленӳсĕр. Çав хушăрах вăл илемлĕ идейăна Киремет юманĕ тавра çыхса пĕрлештерет, символла сăнар калăплать. Хайлав эпикăлăх тата философилĕх енне сулăнать.

Жанр тĕлĕшĕнчен ăна халăх аваллăхĕпе çыхăннă, эпопея сĕмне илнĕ калав йышне кĕртме май пур. Ун чухне Э.Турхан шăпах çавăн йышши аваллăх халапĕсене «калав» тесе палăртать: «Хусана илни çинчен чăваш хушшинче пĕр калав пур». Çеçпĕл Мишшин «Вăрман ачисем» хайлавĕ çав жанра çывăх. Унти аваллăха упраса пурăнакан Ухилле ватă ячĕ авторшăн ют мар: вĕсен йăхне пуçласа яраканĕ те çав ятлă пулнă-мĕн.

<u>«Юншăх».</u> Çеçпĕле лайăх пĕлнĕ, унпа Теччĕ семинарийĕнче пĕрле вĕреннĕ И. Петров çапла аса илнĕ: «Чăваш каччипе вырăс хĕрĕ хушшинчи хутшăнусене пула наци хирĕçĕвĕсем пуçланни пирки роман çырасси çинчен мана Кузьмин темиçе хут та каласа панăччĕ. Унти сюжет çапларах пулмалаччĕ: чăваш каччипе вырăс хĕрĕ паллашаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе çывăхланаççĕ, пурнăç вĕçне çитиччен пĕрле пулма тупа тăваççĕ. Хĕрĕ унăн каччи чăваш пулнине пĕлет те унран йĕрĕнсе пăрăнать, уйрăлса каять».

Çеçпĕл вилсен унăн хăш-пĕр хучĕсене Ф.Пакрышень сăвăç амăшĕ патне ярса парать, вĕсен хушшинче çак калавпа «Упик» пьеса ал çырăвĕсем те пулнă. Вĕсене темиçе хут та тӳрлетсе тухнине шута илсен, автор çав хайлавсене вĕçлесе çитерме тĕллев тытнă тесе каламалла. «Юншăх» калава вăл 1919 çултах çырма пуçăннă. Çакна унăн А. Червякова патне янă пĕр çырăвĕнчен пĕлме пулать. Унта çапларах йĕркесем пур: «Сире, таса та илемлĕ вырăс çыннисене, кăнттам чăвашăн ăраскалсăр шăпи мĕн тери йывăррине ăнланма пӳрмен. Сирĕншĕн тĕлĕнмелле-тĕр, анчах çав чăваш, шел пулин те, сисĕм-туйăмлă».

Кунта Çеçпĕлĕн тепĕр çĕрте каланă сăмахĕсене аса илмелле: «Темле пулсан та малалла чăвашăн чăвашла калаçмалла пулать. Нимĕн тума та çук. Мĕн тăвăн çухалма пĕлмен чĕлхене? Ирĕксĕрех хисепе хурас пулать». Çак «шел пулин те», «ирĕксĕрех» тенисене автор тепĕр çын куçĕпе пăхса калаçнине, вăл унпа вăрттăн тупăшăва кĕнине сисме пулать.

S-082112

Çапла вара Çеçпĕл хăйĕн пулас романĕнче (тĕрĕсрех каласан ăна повесть тесе палăртмалла-тăр) чăвашсене ытти халăхсем кӳрентернине сăнласа парасшăн пулни курăнать. Калавра кӳрентернине мар, герой хăвăрт кӳренме пултарнине кăтартса панă. Унăн катăклăх комплексĕ вăйлă. Вăл (Миклуха) хĕр хăйне упăтепе танлаштарнăшăн хытах кӳренет. Лешсем сăнран китай çынни евĕрлĕрех çамрăк вырăс марне сисеççĕ, çавăнпа ăна тиркештерме пăхаççĕ.

Миклуха прототипĕ Çеçпĕл хăй пулни иккĕленӳсĕр. Çапах та хайлаври ĕç-пуçа чăн пурнăçран ӳкерсе илнĕ тесе калама çук.

<u>«Чунăмçăм, çунатăмçăм».</u> Çеçпĕл хăйĕн савнийĕ (А.Червякова) патне янă 98 çыру упранса юлнă. Вĕсене автор илемлĕ хайлав çырас тĕллевпе шăрçаламан ĕнтĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн çав çырусем литература палăкĕ пулса тăчĕç, илемлĕ хайлав пек, юрату поэми пек вуланма пуçларĕç. Çырусенче Çеçпĕлĕн идеалĕ, илем туйăмĕ, пурнăç чăнлăхĕ, вĕсен хирĕçĕвĕ курăнать. Поэт хăйне те, ытти çынсемпе вăхăта та хак парать.

Çак çырусенче каланине тĕрĕс ăнланас тесен пирĕн А.Червякова чăннипе мĕнлерех çын пулнине пĕлмелле. 1919 çулта А.Червякова Чĕмпĕртен Теччĕ хулине темиçе уйăхлăха хăнана каять, вăхăтлăха унти библиотекăра ĕçлет. Çавăнта паллашаççĕ те икĕ çамрăк чун — чăваш поэчĕпе вырăс чиперкки. Ку таранччен пирĕн тĕпчевçĕсем А.Червяковăна «мещен хĕрарăмĕ», «шурă гвардеец арăмĕ» тесе сивлеккĕн хаклама юрататчĕç, «вăл Çеçпĕле юратман» тетчĕç. Тĕрĕссипе Анастасия Александровна мораль тĕлĕшĕнчен хăйне йӳле янă çын пулман: чиркӳре венчете тăнă саккунлă упăшкине улталама вăл, Çеçпĕле тем пек юратсан та, хал çитереймен. Мăшăрĕ çĕре кĕнĕ хыççăн çеç вăл туйăмне пытарма пăрахнă, хăйĕн чăн-чăн юратнă çыннин адресне шыраса тупса хĕрӳллĕ çырусем çырма тытăннă. Ун чух хăй кая юлнине пĕлме пултарайманскер (пирвайхи çырăвне çырнă тĕле поэт çакăнса вилнĕренпе виçĕ уйăх иртнĕ), пĕрре чунне уçса çырать, тепре мăн кăмăллă йĕркесем шăрçалать, хăйĕн шанăçне çавах çухатмасть.

А. Червякова Çеçпĕл патне 1922 çулхи авăнăн 14-мĕшĕнче çапла çыру çырнă пулнă: «Çырмасăр чăтаймастăп, çавăнпа каллех шурă хута хурататăп, каллех сан канлĕхе сирсе сăмах хушнăшăн йывăра илместĕн пуль тетĕп. Каçар, хаклă çыннăм, анчах ытла йывăр-çке... Хам мĕнле асапланни, шăпа иксĕмĕре икĕ еннелле уйăрса яни çинчен эпĕ сансăр пуçне никампа та калаçаяс çук... Анчах ун чухне эп хам та хам маррине, çын аллинче пулнине, çав тивĕçрен иртейменнипе умри телее сирнине, çапах та чыс сăваплăхне, чыс тасалăхне упраса хăварма пултарнине эсĕ те ăнланмаллах. Пĕлсем, ун чухне эс мĕнле асапланнине курса эп хам та санран кая мар çунтăм. Ман ăшра мĕнле кĕрешӳ пынине эс курман, çавăнпа сан чунна ытлашши ыраттарас мар тесе тăрăшни маншăн мĕн хака ларнине те, чылай чухне эпĕ хампа хам ăнăçлă кĕрешейменнине те ĕненĕн-ши? Çав кĕрешӳре вăйăмхалăм пĕтсе çитнине туйсанах уйăрлса кайрăм санран. Ку маншăн мĕне пĕлтернине эс курман, ма тесен эпĕ чăн туйăма яланах пытарма тăрăшнă, тепĕр чухне, пытарса çитеймен самантсенче, çав туйăм çиеле вăркăнса тухсан та вăл шеллев-хĕрхенӳ кăна мар, вăл ирĕке талпăнакан чун ăнтăлăвĕ пулнине систерес мар тесе вăй хураттăм. Çырусене хирĕçӳллĕ те пăтрашуллă çыраттăм, çавăнпа та пĕррехинче чунри туйăма тӳрремĕнех кăтартсан та ĕненмерĕн эс, хам та ытлашшиех çине тăмарăм, ма тесен çав туйăм ĕмĕрлĕх юрату мар, самантлăх алхасу кăна пулĕ тесе шутларăм. Эс çырма пăрахрăн... Сан çинчен ним

пĕлмесĕр иртсе кайнă çулсем çакна çирĕплетрĕç: сана эпĕ манаймастăп, асăмран кăларса пăрахас тесе тем пек тăрăшсан та кăларса пăрахаймастăп. Миçе çул пытарса пурăнтăм çакна санран, халĕ вара, сан шăпу паллă маррине пĕле тăркачах мĕншĕн тапратрăмха çак калаçăва? Мĕншĕн – пĕлместĕп. Манмалла пулсан йăлтах манăçа кăлар. Йăлтах. Сан умра тӳрре тухма тăрăшнă пек ан туйăнтăрччĕ. Анчах ман сана пĕлтересех килет: çак сăмахсем – йăлтах чăн, хам пĕлменни, хам туйманни çинчен сана эп нихçан та каламан. Ăнланатăп, паллах, мана эс хăвăн пурнăçна çапла арпаштарса янăшăн каçарасшăн пулмăн, туятăп... Анчах уншăн эпĕ хама хам та каçарассăм çук, ма тесен хамăн пурнăç та арăш-пирĕш сапаланчĕ, арканчĕ. Анчах йĕрет, нăйкăшать тесе ан шутла, ман чăтмалла. Кунта эпĕ йăлтах хам айăплă, сана мĕншĕн те пулин йывăра илме сăлтав çук. Хамăн сивĕ те чунсăр кăмăлпа сан туйăмна сӳнтертĕм пулать те, – епле айăплама хăям-ха сана? Хаклă çыннăм! Мĕн тери асапчĕ маншăн «эсĕ мана ăнланмастăн, эсĕ ман туйăмсенчен кулатăн» тесе ӳпкеленисене илтесси. Çав вăхăтра мана мĕнле йывăр килнине пĕлесчĕ санăн... Пĕлнĕ пулсан – унашкалах ӳпкелемĕттĕн эс мана <...>

Эсир маншăн хам туйăма хамран пытарасси мĕне ларнине ăнланман, эп Теччĕрен тухса кайни хамран хам тарни пулнине те пĕлмен. Ун чухне эп Сире ним шантарма та пултарайман, мĕншĕн тесен урăх çын умĕнчи тупама сăваплă тесе шутланă, паллах, çав тивĕçĕме туйса тăнă хушăрах эпĕ Сирĕн тата хамăн пурнăçа аркатма пултарайман. Хам шăпама эпĕ пит шеллесех каймастăп, анчах Сирĕн пурнăçăра пăлхатса янишĕн хама нихăçан та каçарассăм çук. Пур çырура та пĕр шухăшах тăсатăп, ма тесен Эсир хăш çырăвне илессине пĕлместĕп. Çитейĕ-ши хăшĕ те пулин?»

Çапла вара Çеçпĕлпе Червякова хушшинчи хутшăну ансатах мар пулнине, поэт хăй савнă çыннин сăмахĕсене пурне те чăна хуманнине пĕлтĕмĕр. Червякова Çеçпĕл вилĕмĕшĕн хăйне айăпланă. Ф.Пакрышень патне янă пĕр çырăвĕнче вăл çапла хак парать: «Вăл мана чăн-чăн юратупа, халĕ никам та çавăн пек юратма пултараймасла юратнă. Çапла юратма идеаллă лайăх çынсем кăна пултарнă пулĕччĕç. Пирĕн ĕмĕрте ун йышшисем çукрах ĕнтĕ».

Çеçпĕл çырăвĕсене унăн пурнăçĕне пултарулăхĕн тапхăрĕсене лартса уйăрса пăхни тĕрĕсрех пулĕ. Теччĕри малтанхи тапхăрта сăвăç юратупа хыпса çунма ĕлкĕреймен-ха. Тĕрĕссипе Теччĕ тапхăрне икке (малтанхи, кайранхи) пайланин сăлтавĕ поэт А. Червяковăна курнипе сыхăннă. Кайранхи тапхăрта вăл юрату лирики енне сулăнать, çырусене поэзи сăнарлăхне хăюллăн кĕртет. Шупашкар тапхăрĕнчи çырусем иккĕленӳ туйăмĕсемпе тулнă. Сăвăç хăйĕн шанманлăхне палăртать, аллисене те уснă вăл. Ку вăхăтра Çеçпĕлĕн çемçе чĕри чăн пурнăçри хытă та чул чĕреллисене пула хытах ыратать. Çав хушăрах хăй юратакан хĕрпе сăмах вылятма та хал çитерет-ха вăл.

Аслă Сăвăçăмăрăн черетлĕ юбилейĕ çитрĕ, эпир, унăн ĕçне малалла тăсаканĕсем, Çеçпĕл курма ĕмĕтленнисене пурне те пурнăçлама пултартăмăр-ши? Иккĕленетĕп. Чăваш чĕлхи паян кун та хăйне тивĕçлĕ вырăна йышăнаймасть... Культурăмăр, ĕненӳпе тĕн чăвашшăн-и?.. Тĕнчипе çапкаланса çӳресси те вăйлă-ха чăвашăн... Ача-пăчана чăвашран тарма, ашшĕ-амăшĕнчен писме вĕрентесси те вăйлахха чăвашра...

Çеçпĕл чанне хытăрах çапма вăхăт çитмен-ши? Е каллех ура сырса тăрса юлтăмăр-ши?..